Олимпиадные задания по чувашскому языку и литературе для муниципального тура республиканской олимпиады школьников общеобразовательных организаций с изучением чувашского языка. 2017-2018 учебный год. 8 класс

Максимальный балл – 50
Время выполнения – 90 минут

Текста вулăр, хушнă ĕçсене тăвăр.

(1)Вăрманта пур япаларан та тĕлĕнетĕн. (2)Кашни япалинчех тата вăрттăнлăх пур.

(3)Кунпа çĕр улшăнни, хĕлпе çу ылмашни. (4)Йывăçсем симĕсленни е сарăхни. (5)Вăрманти çумăр кĕвви. (6)Хĕлĕпех пăр айĕнче çывăрнă шапа. (7)Пĕтĕм Çĕр пичĕ тăрăх компассăр, карттăсăр вĕçсе çÿрекен кайăксем тата. (8)Юр айĕнче çĕр каçакан ăсансемпе карăксем. (9)Çур çул пĕр вăранмасăр, пĕр хускалмасăр çывракан чĕрĕп. (10) Пуçĕпе çĕрелле çакăнса канакан çара çерçи. (11)Тĕттĕмре эпир кăнтăрла курнă пекех лайăх куракан тăмана. (12)Ир пуçласа каçчен пуç мимине кисретмесĕр шаккакан ула такка.

(13)Куçу мĕн кăна ан куртăр, хăлху мĕн кăна ан илттĕр – пĕтĕмпех тĕлĕнтерет, пуринче те темле вăрттăнлăх пур. (14)Йĕри-тавра мĕн пурри йăлтах тĕлĕнтермĕшсенчен тăрать. (15)Çакă тĕлĕнмелле тĕнче çине çавăнпа тĕлĕнсе пăхатпăр та ĕнтĕ эпир.

Ĕçсем

1. Текстран кайăк ячĕсене çырса илĕр, вырăсла куçарăр. Чăвашла та, вырăсла та пĕр пек ятлă 2 кайăк ятне çырăр.

2. Текстран çулталăк тата талăк вăхăтне кăтартакан сăмахсене панă йĕркепе çырса илĕр, кирлĕ сăмахсем хушса рете вĕçлĕр, кашни сăмахне вырăсла куçарăр. *Полдень* тата *полночь* сăмахсем чăвашла мĕнле пулаççĕ?

Çулталăк вăхăчĕсем: ....

Талăк вăхăчĕсем: ....

3. Текстран евĕрлев сăмахĕнчен (звукоподражательное слово) пулнă глагола (глаголсене) çырса илĕр, вырăсла куçарăр. 3 евĕрлев сăмахĕ аса илĕр те вĕсемпе предложени çырăр.

4. Текстран чĕр чун ячĕсене çырса илĕр, вырăсла куçарăр.

5. Текстран хирĕçлев форминчи глаголсене çырса илĕр.

6. Текстран ÿт-пÿ пайĕн ячĕсене тĕп формăра лартса çырса илĕр, вырăсла куçарăр.

7. Вырăс чĕлхинче профессие кăтартакан сăмахсем ытларах чухне суффиксемпе пулаççĕ: *строитель, танцор* т.ыт.те. Чăваш чĕлхинче профессие кăтартма мĕнле мелсемпе усă кураççĕ (вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене шутлмасăр)?

8. Вырăсларан чăвашла куçарăр.

Я всегда рад видеть вас. Его (ее) старшая сестра съездила в Москву. С легким паром! Человека старит не работа, а горе. Чуваш с чувашом пусть говорит по-чувашски.

9. Чăваш халăх юррисенче шĕшкĕ мĕне (кама) пĕлтерет? Тĕслĕхпе ĕненторĕр.

10. *Экологи* сăмахпа синквейн çырăр.